Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

## Автор: Давыдов-Анатри Василий Иванович

## Книга: Асатте парни

## Стихотворение: Чухӑнпа пуян

**(Халӑх юмахӗ)**

Ӗлӗк-авал пӗр ялта
Пурӑннӑ тет пӗр пуян.
Вӑл ҫынсене юратман
Никама та пулӑшман.
Вӑл хӑй куштан пулнӑ,тет,
Мӑнкӑмӑллӑ утнӑ, тет,
Ҫут тӗнчери чӑнлӑха
Юратман, тет, ҫак куштан,
Сӑпай пулма пурнӑҫра
Нихӑҫан та шутламан.
Тарҫа кӗрет чухӑн ҫын
Ак ҫак куштан ҫын патне.
Килӗшеҫҫӗ, тет вӗсем
Алӑ ҫапсах ӗҫ хакне.
Пуян ҫынни чухӑна
Ҫӗр памашкӑн пулчӗ, тет.
Чухӑн ҫын ҫак ҫӗр ҫине
Кӗрхи тулӑ акрӗ, тет.
Кӗрсе ӳкет чухӑн ҫын
Хайхи куштан аллине,
Ҫӗрӗн-кунӗн тӗртленет,
Хуҫать пилӗк-ҫурӑмне.
Ҫапла, чухӑн тарҫӑра
Кунне-ҫӗрне иртерет.
Ҫав вӑхӑтра уй-хирте
Акнӑ тырӑ ҫитӗнет.
Уншӑн чухӑн хӗпӗртет:
Ӗмӗр кӗтни ҫитрӗ, тет
Кунтах куштан ани пур,
Ак тамаша, ах, тур-тур, –
Унта вара ним те ҫук,
Тырри-пурри пач та ҫук.
Курсам: чухӑн шутлани,
Кунӗн-ҫӗрӗн тӑрӑшни
Кайман иккен харама,
Ун сӑлтав пур савӑнма.
Ҫитет вӑхӑт тыр вырма.
Тухать халӑх хир ӗҫне.
Куштан ҫын та тыр вырма
Ярать тарҫи-тӗрҫине.

Анчах вĕсем уй-хиртен
Таврăнаççĕ кулянса.
– Ану çинче ним те çук, –
Теççĕ куштан хуçана.
Тепĕр кунне ир-ирех
Куштан утрĕ хăй хире.
Чăн та иккен ял кулли:
Пачах шăтман ун тулли.
Çук çын ани кашласа
Ларать сарă тулăпа.
Хуçи килнĕ тыр вырма
Ирех çутă шуçăмпа.
Акă хальхи куштан çын
Пуçлать вăрçма, ятлаçма.
Хăй тарçине, чухăна,
Çын шутĕнчен кăларма.
«Ку вăл йăлтах ман ана!» –
Тесе куштан çухărать.
Чухăн унăн умĕнче
Çапла сăмах пуçарать:
«Кун пек эпир ятлаçса
Вĕçне-хĕрне тупас çук,
Ыран килер çакăнта
Ирех хĕвел тухаспа.
Чĕнер çĕрĕн амăшне,
Чĕнер ырă кăмăлпа.
Çĕр амăшĕ ун чухне
Калĕ хăйĕн сăмахне:
Тулă акнă çак ана
Кама тивĕç иккенне…»
Çак шухăшпа куштан çын
Килĕшнĕ пек пулчĕ, тет.
Тепĕр ирччен хăй килне
Хăй çулĕпе утрĕ, тет.
Куçран куштан çухалсан,
Чухăн чĕнчĕ хăй хĕрне:
– Итле, ачам, итле, – тет, –
Тăнла аçу сăмахне.
Ыран ирех çакăнта –
Çĕмĕл ăшне эс пытан.
Çав пуяна, куштана,
Чăн сăмаха чăн калар.
Хĕрĕм, сантан вăл ыйтсан:
«Камăн тулли ку? – тесе,
Эс шăппăн çеç сас парсам:
«Чухăн çыннăн вăл», тесе.
Пуян çынпа чухăн çын
Тепĕр кунне, ирхине,
Утаççĕ, тет, васкаса
Сарă тулă пуссине.
Çитсе тăнă-тăманах
Хире, ана хĕррине,

Мăнкăмăллăн куштан çын
Çĕклерĕ, тет, аллине,
Вара çапла ыйтрĕ, тет,
Пăхса хĕвел еннелле:
«Çĕр амăшĕ, пĕлтерсем:
Çак çĕр кама лекмелле?..»
Чухăн хĕрĕ ку сасса
Илтрĕ ана варринче,
Тăван ашшĕ ячĕпе
Каларĕ, тет, шухăшне:
«Ку çĕр чухăн çыннăн», – тет
Хăйĕн уçă сассипе…
Пуян каллех çухăрса
Утрĕ, тет, хăй çулĕпе.

1940-1945

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.